# Тупмалли

**Тавçăруллă Марине**
Атту йĕрет вăл
хăрăк туратăн ăшши çук
Банан çиес килет
Илсе парать
Сăвăç марине
«Ыранюк» тесен лайăхрах
Ашкăнчăк кушак
Çивĕч чĕлхе
Пиçмен пашалу
Агроном кушак
Марине ашшĕне шеллет
Анюк савăнсах пуçтарчĕ
Марине вĕрентет
Çав пăтта валюк çитĕр
Кăнтăр çĕршывĕнче

**Маринепе тусĕсем**
Куçкĕскирен пăхни
Ӳсесси килет
Шкула каяс килет
Тăмана
Улах
Маттуркка эп, маттуркка
Эп унран та чеерех
Тутлă мар
Вăйă
Пĕчĕкçĕ ĕне
Урхамах
Çĕнук
Тăрăшатăп
Ăмăрту
Урокра
Ӳсетĕп
Ан ўркен
Инкек
Кукамайăм хăналать
Ху ўстер
Куян
Сар хĕвелĕм
Çуркунне
Кĕске ыйхăллă кушак

## АТТУ ЙĔРЕТ ВĂЛ

- Марине, пепкем, выçрăн пуль, ларса çи-ха хăвăртрах, - тет амăшĕ урамра вăрах выляса çӳренĕ хĕр ачине.

- Хам выçман та, хырăм питĕ хытă выçнă манăн. Анне, ăна çитер-ха часрах. Атту йĕрет вăл.

## ХĂРĂК ТУРАТĂН ĂШШИ ÇУК

Марине аппăшĕ пăхмасăр сăвă калама вĕренет.

- «Тухса кайрĕ вăрмана хăрăк турат пуçтарма», - вулать вăл хытă сасăпа.

- Эй, айванскер! - тарăхать Марине. - Асанне каларăш, хăрăк туратран мĕн ăшши пултăр.

## СĂВĂÇ МАРИНЕ

- Аннеçĕм, итле-ха ман сăвва, - тет хаваслă Марине.

Эпĕ аннене юрататăп.
Юрататăп эпĕ аннене.
Аннене юрататăп эпĕ,
Питĕ юрататăп ăна!

- Поэт иккен манăн чĕкеçĕм, - тĕлĕнет амăшĕ.

- «Поет» тени «юрлать» тени пулать-çке. Эпĕ вара сăвă калатăп, - ăнлантарать Марине.

## ÇИВĔЧ ЧĔЛХЕ

- Эх, çав Маюк чĕлхи! Ытла та çивĕч-çке! - те хурлать, те мухтать кӳршĕ хĕрарăмне асламăшĕ.

- Хăйрать пуль вăл ăна. Пирĕн килти çĕçĕсене леçсе пар Маюк аппана, хăйраса патăр. Атту тек аттене çĕçĕ мăка тесе ятлатăн.

## ПИÇМЕН ПАШАЛУ

- Чăн-чăн пиçмен пашалу, çавăн пек çăмăл сăвва та пăхмасăр калама вĕренеймен, - каласа парать такам çинчен Марине аппăшĕ амăшне.

Марине, калаçăва илтсе юлнăскер, чупса пычĕ те:

- Анне халь анчах кăмака хутса кăларчĕ. Пиçмен пулсан ларт пашалăвне хăвăртрах кăмакана, - терĕ.

## АНЮК САВĂНСАХ ПУÇТАРЧĔ

- Улми йывăççинчен аякка ӳкмест вăл, - калаçаççĕ Марине амăшĕпе асламăшĕ тем пирки.

- Ӳкмест тетĕн-и? - хирĕçлет урайĕнче пуканепе вылякан Марине. - Ĕнер ав вăйлă çил пулчĕ те - пирĕн улмуççи çинчи пан улмисем кӳршĕсен пахчине çитиех ӳкрĕç. Анюк савăнсах пуçтарчĕ вĕсене.

## УЛАХ

Анне кайнă пасара.
Атте кайнă сунара.
Йăмăкпа пире - улах.
Тăрмăшатпăр хамăрах.

- Пĕçерес улах пătти, -
Тет ман йăмăк Ултутти.
Вăл кĕрпе илсе кĕрет.
Лăкăр-лăкăр! шыв вĕрет.

Кĕрпине ярас виççе -

Сарăлать кĕрпе пиçсен.

Тăрăшатпăр йăмăкпа -
Пăтрататпăр кашăкпа.
Ак хушатпăр услам çу.
Питĕ тутлă. Чăтăм çук.

Пиçрĕ пăтă пăртакран.
Ак ларатпăр апата.
Ху пĕçернĕ апатран
Тутли çук пуль, тупата.

## ЭП УНРАН ТА ЧЕЕРЕХ

Ах, чее-çке вĕлтĕрен!
Çатăр-р! çыртрĕ пӳрнерен.
Таттарасшăн мар хăйне,
Кăтартать хаярлăхне.

Эп унран та чеерех,
Улталарăм пурпĕрех -
Алсишпе тататăп çатăрт!
Чĕпĕтеймĕ урăх çатăр-р!

## ТУТЛĂ МАР

Пиçмен чие çупкамне
Татнă пĕчĕк Урине.
Мăч хупать кăвак куçне.
Тĕлĕнсе суллать пуçне:
- Ах, аннеçĕм, тутлă мар!
Вырăннех çакса хурар.

## ÇĔНУК

Йăл! та йăл! кулать Çинук,
Телейли унран халь çук:
Çĕнĕ кĕпе, çĕн саппун,
Çĕнĕ сумка та пур ун.
Йăлтăр-ялтăр пушмаксем,
Тетрадьсем, кĕнекесем...

Ма-ши пухнă çак мула?! -
Каймалла кĕçех шкула.
Витлешетĕп: - Эй, Çинук!
Çинук мар эс халь - Çĕнук.

## ТĂРĂШАТĂП

Çурăм тăрăшса кĕпе -
Пулса тăтăм йĕп-йĕпе.
Урай тăрăх шыв юхать.
Типĕтсех тинке тухать.

## ӲСЕТĔП

Шывĕ хатĕр каткара,
Сĕткен курăк - сырăшра.
Хăвăртрах вĕçлес ĕçе:
Килмелле кĕтӳ кĕçех.

Уçса хутăм алăка,
Алла тытрăм мăн курка.
Васкаса килет ĕне,
Витрепе кĕтет анне.

Ăшă сĕт часах ĕçетĕп:
Ир валли пĕр шит ӳсетĕп.

## АН ӲРКЕН

Ĕнтĕркенĕ йыт çури.
- Хам-м! Шелле-ха,
Кĕркури!
Хăвăртрах кил ман пата,
Ан ӳркенччĕ, тупата.

Хам! Хам! Хам!
Эп шăнатăп, ăнлансам!
Туса пар манна, ӳпле,
Сивĕ хĕл кĕç çитмелле.

## САР ХĔВЕЛĔМ

Пайăркусене савса салатрăн,
Канлĕ ыйхăран пире вăратрăн.
Савăк кашни çыншăн тĕлпулу.
Эмелтен те сиплĕрех куллу.

Сар хĕвелĕм, еплерех эс ырă!
Пуç тайса çĕкленчĕ ылтăн тыră,
Пахча çимĕç тулчĕ сим пылпа...
Тус пуласчĕ ман ялан санпа.

## ÇУРКУННЕ

Шарт! та шарт! пĕррехинче
Илтĕнет çырма енчен.
Мĕн сасси ку? Ах анчах!
Вирхĕнет ача-пача.

«Ăшалать» хĕвел пăра
Шарт! та шарт! çура-çура.

Çуркунне ку! Çуркунне!
Ыйхăран çĕр вăранать.

Петĕр те кимми çине
Çилкĕçсем лартма васкать.